Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

91 (7516) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи октябрĕн (юпа) 31-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Республика кунне хатĕрленсе**

## Тирпей-илем малта пултăр



Муркашри Парковая урамри çĕнĕ аллейăн пуçламăшĕ çапла никĕсленчĕ.

Çак тĕллеве тĕпе хурса ĕçлеççĕ паян районти ĕç коллективĕсемпе обществăлла организацисем, уйрăм çынсен пуçаруллă ушкăнĕсем. Тирпейлĕхпе илемлĕх вара эпир пурăнакан вырăнсенче садсемпе парксем хуçаланма пуçламасăр пулмастех. Раççей çĕнелсе улшăнни, Чăваш Ен мал туртăмлă аталанни Муркашсене те пурнăç айккинче хăвармасть.

"Чăваш ачин пурнăçра çурт тумалла, йывăç лартмалла, ача çуратса ӳстермелле", – тесе вĕрентнĕ аслă асаттесем. Çак ăслăлăх ăруран ăрăва куçса пырать. Пурнăç аталанăвĕн кашни самантĕнчех вăл хăйне евĕр тĕс тăхăнать, ыранхи кунпа пурăнма çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртет.

Йывăç ларт та ăна упра. Çак чĕнӳпе юлашки çулсенче чăвашсем вуншар-çĕршер пин тĕп йывăç лартрĕç, ялсемпе хуласене çĕнĕ тум тăхăнтартрĕç. Халĕ каланине хамăр район центрне илсен те çынсем çĕнĕлле шутлама пуçлани куçкĕрет. Акă Муркашăн Хĕвел тухăç енче юлашки çулсенче çĕнĕ пурнăç варкăшĕпе тулнă микрорайон ӳссе ларчĕ. Çурчĕсем çĕнĕ архитектура тумĕ тăхăнни инçетренех курăнать. Илемлĕ çуртсем вара хăйсем патĕнчи тавралăха та чун кăмăллĕ тума ыйтаççĕ. Çак туртăм Республика кунне çитес çул Муркашра ирттерме палăртсан çĕнĕ вăй илчĕ. Çавна май нумай хваттерлĕ çуртсен кил хушшийĕсене тирпей-илем кĕртессипе ответлă çынсем те, унти хваттерсенче пурăнакансем те активлăх кăтартма пуçларĕç. Пĕрлехи çак тĕллевпе Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Никитин, "Пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ" МУП директорĕ Н. Любимов, район администрацийĕн пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн ертӳçи А. Петров тăрăшнипе иртнĕ кунсенче Муркашри Октябре 50 çул урамри йышлă сарайсемлĕ çуртсенче пурăнакансемпе тĕл пулу иртрĕ, пĕрлехи килĕшӳпе сарайсене çывăх вăхăтрах автозаправка хыçĕнче уйăрнă ятарлă вырăна куçарма килĕшрĕç. Тирпей-илем ыйтăвĕсемпех тĕл пулусем Парковая урамра та пулчĕç. Кунта пурăнакансем вара октябрĕн 27-мĕшĕнчи тĕл пулăва асра хăварма хăйсен урамĕнче хурăнсен аллейине лартса хăварма йышăннă. Йышăннă – тунă: Парковая урама илсе каякан çул хĕррипе 350 хурăн хунавĕ вырăн тупнă. Кунта пурăнакансен планĕнче çуртсем хушшинче ачасем вылямалли кĕтеслĕ спорт лаптăкĕ йĕркелес ĕмĕт пур. Çак сывлăх вырăнне вара йĕри-тавра улмуççисем хупăрласа илĕç.

Мĕнех, пуçламăш утăм пуртан ытти те пурнăçа кĕресси пирки иккĕленӳ çук.

Йывăç лартмалли уйăхлăх вĕçленсе пынă май район шайĕнче вăл мĕнле иртни пирки. Уйăхлăха Юнкă ял тăрăхĕ Юнкăпа Кăпас хушшинчи çул хĕррине унччен лартнă йывăçсене юсассинчен пуçларĕ, 1200 тĕп йывăç кунта хăй вырăнне тупрĕ. Çавăн пекех Уйкас Янасал ял тăрăхĕ те Юрпаша каякан çĕнĕ çул хĕррипе 5 пин тĕп йывăç лартса ырă ĕç турĕ. Пĕтĕмпе вара районта çак уйăхлăхра 15000 тĕп йывăç лартма пултарни Муркашсем тирпей-илемлĕхе мала хунине кăтартать. Çапла пултăрччĕ те.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерсе**

## Иккĕмĕш магазин уçăлчĕ

Юлашки çулсенче Муркаш райповĕ вăй илсех пынине районта пурăнакансем лайăх пĕлеççĕ. Ĕç кăтартăвĕсем коллективăн мăнаçланмалласкерсем. Кăçалхи 9 уйăхра акă районти ваккăн сутмалли тавар çаврăнăш 349658,5 пин тенкĕпе танлашать пулсан, Муркаш райповĕн тӳпи – чи пысăкки: 165476 пин тенкĕлĕх пурнăçланă умри плана. Е иртнĕ çулхи çак вăхăтрипе танлаштарсан, 32,8 процент ытларах. Республикăри, Реççейри ĕçтешĕсем хушшинче те ырă ятлă Муркаш райповĕн коллективĕ.

Райпо çитĕнĕвне вара ытларах тавар туянакансем магазинсен сăн-сăпачĕ улшăнса пынипе, магазинсенчи тавар ассортименчĕ пуянланса пынипе хакласçĕ. Тата сутуçăсем хăйсемпе кăмăллă пулнипе. Тепĕр паллă – çĕнĕ магазинсем уçăлнипе. Тыр-пул уявĕн кунĕнче асăннă райпо Муркашра тĕплĕ юсав ĕçĕсем тунă хыççăн самообслуживани енĕпе ĕçлекен магазин уçрĕ.

– Хресченпе прилавок хушшинчи лару-тăрăва тата та лайăхлатма пулăштăр вăл. Халăх паянхи пекех йышлă пултăр магазинта, – терĕ район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов Муркаш райпо коллективне магазин уçнă ятпа саламласа.

Районта пурăнакансене вара Юрий Александрович тулăх пурнăç сунчĕ:

– Магазина кĕме яланах сирĕн кăмăл пултăр, кирлĕ тавара туянма укçа-тенкĕ çителĕклĕ пултăр, – терĕ.

Муркаш райпо Канашĕн ертӳçи Б. В. Андреев каланă тăрăх, малтан кĕнеке магазинĕ пулнă çуртри тĕплĕ юсав ĕçĕсене туса ирттерме 2 уйăх кирлĕ пулчĕ. Пĕтĕмпе вара 5 миллион тенкĕ укçа тухса кайрĕ. Вăл шутран юсав ĕçĕсем ирттерме – 3 миллион тенкĕ. Оборудовани 1 миллион тенкĕлĕх туяннă. Тепĕр миллионĕ магазина ăшă, çутă кĕртме тата ытти ĕç тума. Кĕскен каласан, магазина хăт кĕртме.




–Муркаш районĕнчи суту-илӳ ĕçченĕсем чăннипех те ырă сăмаха тивĕç. Мăн Сĕнтĕр райповĕнче самообслуживани йĕркипе ĕçлекен магазинсем 3 пулсан, Муркаш райповĕ паян çакнашкал иккĕмĕш магазин уçать, – терĕ Чăвашпотребсоюз Канашĕн председателĕ В.М. Павлов Муркашсене çак паллă кунпа саламланă май.

Хĕрлĕ хăйăва касса шала кĕнĕ хыççăн чăннипех те тĕлĕнмесĕр май çук. Çĕнелсе улшăннă магазинта тавар ассортименчĕ питĕ пуян. Чи кирли вара – тавар туянаканшăн питĕ меллĕ. Çывăхран пăхса малтан илме шутламан тавара та туянатăн. Ытти магазинсенче çавна тытса пăхмаллаччĕ, тесе ыйтма та аван мар. Таварне туянмасан, сутуçине чăрмантарнă пек. Кунта вара никама чăрмантармасăр кирлĕ таварлă пулатăн.

– Кашни кун кирлĕ çимĕçсем – сĕт-турăх, кĕрпе, тип çу тата ытти хăш-пĕр таварсем чăннипех те пасартинчен йӳнĕрех, - тет райпо Канашĕн ертӳçин çумĕ Р.В. Скворцова.

Тавара туянакана илĕртекен тепĕр енĕ вăл – апат-çимĕçе пĕрре кĕрсе 100 тенкĕ ытларах суммăлăх туянтăн пулсан, суммине 3 процент чухлĕ йӳнĕрех тӳлетĕн. Çумра дисконтлă карта пулсан. Ăна вара магазинтах 25 тенкĕпе туянма пулать. Хамăрăн калаçура Борис Васильевич тепĕр уйрăмлăх çинче чарăнчĕ. Тавара ку магазинтан банк карттипе те туянма пулать иккен.

Эппин магазинтан халăх ан татăлтăр. Кунта ĕçлекен 8 сутуçи те тавар туянакансемпе яланах тарават пулччăр.

**Л. ТУКТИНА.**

**Яваплăха туясчĕ**

## Парăм пулмасан, хамăрах лайăх

***Хаçат вулакансем пĕлеççĕ ĕнтĕ, иртнĕ çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа пирĕн районта "Пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани" МУП йĕркеленчĕ. Тĕрлĕрен пулăшусем панипе пĕрлех асăннă предприяти пурăнмалли çурт-йĕр фончĕн пĕрлехи пурлăхне йĕркеллĕ тытса тăрассипе тата юсассипе ĕçлет. Çавăн пекех – хваттер хуçисемпе вĕсен çемье членĕсене коммуналлă пулăшусем парать. Çак ĕçсене мĕнле йĕркепе туса пыни çинчен асăнннă МУП ертӳçи Н.В. ЛЮБИМОВ çапла ăнлантарать:***

– Çӳлерех асăннă хамăрăн çак задачăсене пурнăçлама эпир тĕрлĕрен подрядчиксемпе – ăшă, электроэнерги, сивĕ шыв паракан, канализацишĕн яваплă организацисемпе килĕшӳсем тăватпăр. Çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусем пĕр чăрмавсăр тата пахалăхлă пуласси вара нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансенчен хăйсенчен те нумай килет. Çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн вăхăтра тӳлесе тăни пире подрядчиксемпе тата ăшă, çутă, шыв парса тăракан, канализацишĕн яваплă организацисемпе хăйсен ĕçĕшĕн вăхăтра татăлма май парать. Çакă вара граждансене хăтлă та хăрушсăр условисем туса пама, нумай хваттерлĕ çуртсенчи пĕрлехи пурлăха йĕркеллĕ тытса тăма, пахалăхлă коммуналлă пулăшусем пама май парать.

**– Çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн вăхăтра тӳлеменнисене мĕн кĕтет çак айăпшăн?**

– Чи малтанах çакна палăртас килет: РФ Çурт-йĕр кодексĕн 155-мĕш статйипе килĕшӳллĕн çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн иртнĕ уйăхшăн хыççăнхи уйăхăн 10-мĕш числиччен тӳлемелле. Хальхи вăхăтра пурте çак йĕркене пăхăнаççĕ тесе калама çук. Çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани" МУП умĕнче парăмлă граждансем пур. Çак парăмсене чакарас тесе пирĕн Муркаш районĕн 1-мĕш номерлĕ Суд участокне суд приказне кăларма ыйтса заявленипе е парăмсене вăхăтра тӳлемен çемье членĕсенчен парăма шыраса илмелли çинчен калакан иск заявленийĕпе тухма тивет.

Ку çеç те мар. Çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн нумай вăхăт тӳлемен хваттер хуçисем тĕлĕшпе тата та çирĕпрех мерăсем йышăнма тивет. Çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн шута илмелли сăлтавсăрах 6 уйăхран та ытларах тӳлемесен, парăмçăпа унăн çемье членĕсене вĕсем пурăнакан хваттертен кăларса яма ыйтса район судне иск заявленийĕпе тухатпăр.

Суд йышăнăвне вăхăтра пурнăçламан граждансем те пур. Суд йышăнăвĕ хыççăн та парăма хăйсен ирĕкĕпе тӳлесе татман граждансенчен вара парăма вăйпах илме тивет. Урăхла каласан, документсене суд приставĕсен Муркаш районĕнчи пайне ярса паратпăр.

**– Николай Валентинович, миçе киле çитнĕ суд приставĕсем?**

– 2006 çулта суд приставĕсен пирĕн районти пайне 217 суд приказне ярса панă, кăçал вара – 157 суд приказне тата 12 исполнительнăй хута. 2007 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне иртнĕ çул ярса панă суд акчĕсен 70 проценчĕ, кăçал ярса панисенчен 75 проценчĕ пурнăçланнă. Çавăн пекех Муркаш район сучĕн иртнĕ çулхи июнĕн 1-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн суд приставĕ-ĕç тăваканĕ Ярославкăри нумай хваттерте пурăнакан парăмлă пĕр çемьене хваттертен кăларнă.

Палăртса хăвармалла, "Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компани" МУП ĕçченĕсем суд приставĕсемпе пĕрле парăмсем пур хваттер хуçисем патне тухсах çӳреççĕ. Анчах суд приставĕсем мĕнле тăрăшсан та пур суд акчĕсем те пурнăçланаймаççĕ. Çемье ăнăççăр пулни, ĕç укçи çукки, граждансем яваплăха туйманни çакăн сăлтавĕсем пулса тăраççĕ те.

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

**Декабрĕн 2-мĕшĕнче – РФ Патшалăх Думин суйлавĕ**

## Тӳлевсĕр йĕркепе пичетлеме

Октябрĕн 29-мĕшĕнче райхаçат редакцийĕнче Пĕтĕм Раççейри политика партийĕсен суйлав умĕнхи агитаци материалĕсене тӳлевсĕр йĕркепе пичетлеме райхаçат страницисенче лаптăксем уйăрма шăпа туртнă.

Тӳлевсĕр лаптăксене ноябрĕн 14-мĕшĕнчи номерте суйлава хутшăнакан 11 политика партийĕ валли уйăрма палăртнă. Пичете хатĕрленĕ материалсене райхаçат редакцине пилĕк кун маларах çитермелле. Текстсене хут çине пичетлемелле тата электронлă версие дискетăсемпе илсе пымалла. Текст калăпăшĕ – 2 пичет листи (12-мĕш шрифт).

Çав кунах суйлав умĕнхи агитаци материалĕсене тӳлевлĕ майпа пичетлемелли йĕркене те палăртнă. Тĕплĕнрех редакцире ыйтса пĕлмелле.

**Райхаçат редакцийĕ.**

**Кану кунĕсем**

## Çак кунсенче канатпăр

Ноябрь уйăхĕн 4-мĕшĕ – Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ. Нумаях пулмасть çакна уяв шутне кĕртсе паллă тума пуçларĕç çĕршывра. Анчах та кăçал вăл вырсарни куна лекет. Мĕнлерех канăпăр-ши çак уяв вăхăтĕнче? Çак ыйту, паллах, чылайăшне кăсăклантарать. Çак кунсенче Раççей ĕçлев комитечĕ лару-тăрăва уçăмлатнă. Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ вырсарни кун пулнă май, вăл тепĕр куна куçать. Çавăнпа та чӳк уйăхĕн 3, 4, 5-мĕшĕсем канмалли кунсем шутланаççĕ.

Çĕнĕ çул уявĕччен те вăхăт нумаях мар. Кăçал та Раççей çыннисене пĕлтĕрхи пекех эрне ытларах каникул кĕтет. 2007 çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕ – тунти кун. Ун вырăнне 29-мĕшĕ, шăмат кун, ĕç кунĕ пулĕ. 2007 çулхи раштав уйăхĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа 2008 çулхи кăрлач уйăхĕн 7-мĕшĕччен кану кунĕсем шутланаççĕ. Çĕнĕ çулăн 8-мĕшĕнче вара пĕтĕм халăх ĕçе пикенĕ.